Продукци пахалăхĕ пирки

Мĕн ĕçетпĕр тата мĕн çиетпĕр?

Юлашки вăхăтра эпир кунсерен çиекен апат-çимĕç продукчĕсем пахалăх енчен самай япăхни тата вĕсене çынсен организмне сиен кўме пултаракан тĕрлĕрен тултармăшсем хушса халăха сутни нумайăшĕшĕн вăрттăнлăх мар ĕнтĕ. Çавна пулах çынсем ытларах чирлеççĕ, çамрăксем хушшинче те сывлăх енĕпе çирĕпписен шучĕ çулран çул чакса пырать. Паллах, пирĕн магазинсенче прилавоксем çинче тĕрлĕрен апат-çимĕç туллиех, анчах та организма сиен кўменни сахалрах. Кăлпассисем, майонезсем е ытти йышши çимĕç хатĕрленĕ çĕре мĕн кăна ямаççĕ пулĕ. Хăш-пĕр кăлпассисене кăлпасси теме те май çук. Мĕншĕн тесен вĕсене ашсăрах тăваççĕ пулас.

Апла пулин те В. Путин сĕнĕвне шута илсе кăçалхи февралĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа апат-çимĕç продукчĕсене тата тĕрлĕ йышши косметика таварĕсене ятарласа сертификацилессине пăрахăçа кăларнă. Çапла вара çак тавара сутаканăн продукци пахалăхĕ тивĕçтерет тата вăл сывлăхшăн хăрушă мар тесе декларацi çырмалли кăна юлать. Анчах та кам-ха хăйĕн таварне хурлĕ? Ахальтен каламан ĕнтĕ йытă хăйĕн хўрине вараламасть тесе.

Хальхи вăхăтра, укçа тăвас тесе, темĕнле çиме юрăхсăр тавара та халăха лайăх тесе сутма пултараççĕ. Çак «çĕнĕлĕхе» йышăннă хыççăн вара пирĕн «пахалăх» сăмаха пачах та манма лекет пулĕ.

Мартăн 2-мĕшĕнчен пуçласа вара, каллех правительство пуçлăхĕ сĕннипе, апат-çимĕç продукчĕсен пахалăхне санитари служби енчен «ытлашши» контроллеме чарнă. Çакăн хыççăн çынсен мĕнле пахалăхлă апат-çимĕç продукчĕсем туянса çимелли каламасăрах паллă. Ман шутпа, çакăн пек туни пирĕн çĕршывра çулран çул эпир туса илекен апат-çимĕç продукчĕсен хисепĕ чакса пынипе çыхăннă. Çавăнпа та çынсен мĕн пуррипе çырлахма, мĕн пуррине çимелли кăна юлать. Çынсен сывлăхĕ пирки вара камсен шутламаллаши?

Çынсем çиекен апат-çимĕç продукчĕсен шутĕнче чи пысăк пĕлтерĕшли, паллах, сĕт шутланса тăрать. Уйрăмах вăл ачасемшĕн, чирлĕ çынсемшĕн пĕлтерĕшлĕ. Çавăнпа та çак продукт пирки нумай калаçатпăр, ял çыннине вăл самай хумхантарать. Пирĕн пурнăçра таварсен хакĕсем тата халăх усă куракан газ, электроэнерги, çунтармалли тата сĕрмелли материалсен хакĕсем ўсни тата ытти те хакланса пыни çĕнĕлĕх мар ĕнтĕ. Анчах та ял çынни ўстерекен, туса илекен тĕрлĕрен апат-çимĕç продукчĕсен хакĕсем кăна пĕр вырăнтах «ташлаççĕ».

Сĕт хакĕ пирки те нумай калаçаççĕ. Анчах ял çыннисĕр пуçне вăл никама та хумхантармасть. Сĕт тумашкăн ют патшалăхсенчен мĕн чухлĕ çăнăх, сĕт е, урăхла каласан, ЗЦМ (заменитель цельного молока) илсе килеççĕ. Малтанхи вăхăтра ЗЦМ-а пăрусемпе сысна çурисене кăна çитернĕ пулсан, паян вара пирĕн те çиме тивет.

2008 çулхи июнĕн 12-мĕшĕнчех сĕт тата сĕтрен тунă тĕрлĕ йышши ытти продуктсене пахалăх енчен тĕрĕслеме техникăлла регламент йышăннăччĕ. Çак регламентпа килĕшўллĕн ЗЦМ-ран хатĕрленĕ сĕте сĕт тесе йышăнмалла мар тенĕ. Кун пек продукта суту-илўре «молочный напиток» тесе сутмалла. Апла пулин те паянхи кунччен те çак техрегламент йĕркеллĕ пурнăçламасть. Асăннă çăнăха шывпа пăтратаççĕ те сĕт тесе сутаççĕ.

Юрать-ха тата ăна вĕретнĕ шывпа хутăштараççĕ пулсан. Анчах мĕншĕн-ха сĕте туянакан çыннăн вăл мĕнле сĕт иккенне пĕлмелле мар? Паллă ĕнтĕ, ял çынни ĕне сусан хăйĕн продукцийĕ пирки иккĕленмест. Анчах та кунта йĕрке камăн-ха тумалла? Мĕншĕн-ха çак техрегламента сĕмсĕррĕн пăсса паянхи кун та чикĕ леш енчен кўрсе килнĕ паллă мар пахалăхлă ЗЦМ-ран тунă пăтрашăнчăка «молоко» тесе сутаççĕ? Унăн хакĕ те сĕт хакĕнчен йўнĕрех пулмалла вĕт-ха?

Мартăн 3-мĕшĕнче Москавра Президент-отельре сĕт туса илекенсен наци канашĕн 1-мĕш съезчĕ иртнĕ. Ăна РФ Правительствин пĕрремĕш вице-премьерĕ В. Зубков уçнă. Сĕт ыйтăвĕ паянхи пурнăçра чи çивĕч ыйтусен шутĕнче пулнă май, асăннă съездра çак ыйтăва самай тĕплĕ сўтсе явнă. Малашне сĕтĕн базăллă хакĕ 1 литршăн 11 тенкĕрен йўнĕрех пулмалла мар тесе йышăну тунă. Регионсенче çак хака, кирлĕ пулсан, ўстерме кăна пултараççĕ тенĕ. Нивушлĕ малалла ял ĕçченĕн ĕçне шута хума пуçлаççĕ? Иккĕленў пысăк пулсан та, çакна ĕненес килет. Иртнĕ 2009 çулта районта халăх усракан ĕнесен хисепĕ 255 пуçа яхăн чакнă. «Çўлте» ларакансем нимĕн те тумасан ĕнесен шучĕ ўсес çукки никамшăн та вăрттăнлăх мар. Унсăрăн ют çĕршывсенчен кўрсе килнĕ çăнăхран тунă пăтранчăка кăна çимелле пулассине те, паллах, вĕсем пĕлеççĕ.

П. ВОРОБЬЕВ,
депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ.

«Çавра сĕтел» хушшинчен

Ăшă кăмăлпа тав тăватпăр сире

Унччен тĕттĕмлĕхре асапланнă чăваш ялĕсем 20-мĕш ĕмĕрте чăннипех çутта тухрĕç. Халăха хутла вĕрентесси епле аталанса пынине çынсен килĕсенче уçнă шкулсенче кăмака хутса ăшăтса вулама-çырма вĕреннĕ асатте-асаннесем те, Тăван çĕршывăн аслă вăрçи хыççăнхи йывăрлăхсене сире-сире хутла вĕреннĕ атте-аннесем те, çĕнĕлĕх тапхăрĕнче партăсем хушшине ларнă пичче-аппасем те нумай аса илўсемпе каласа пама пултараççĕ. Йывăр пулнăи е çăмăл, анчах вĕсем пĕлў çулĕ çинчи йывăрлăхсем умĕнче алă усман, çĕннине пĕлессишĕн ырми-канми вăй хунă, куллен пĕлў çулне уçса-çĕнетсе пынă. Çак хумпа аталанса чăваш ялĕсене кĕнекесемпе хаçат-журналсем çитнĕ, унта та кунта библиотекăсем уçăлнă, ялсен сăнĕсем урăхланнă, çынсен воспитанийĕпе тыткаларăшĕ тата пурнăç стилĕ улшăннă. Çынсен пĕлў шайĕ ўснĕ май ялти шкул мал туртăмпа пурăнакансен тата ял культурине упракансен центрĕ пулса тăнă. Кунти учитель вĕрентекен кăна мар, шанчăклă юлташ та, вăхăтлă психолог та, артист та, сывăх тăван та, ырă тĕслĕх те. Çак ырă ensem Турайри вăтам шкулта вăл уçăлнăранпах тымар янă. 2010 çула Учитель çулталăкĕ тесе йышăннăран çак ырă пуçарусем çĕнĕрен вăй илчĕç. Ăна пирĕн шкулта унченхи çулсенче вĕрентнĕ учительсемпе кунтан тĕрлĕ вăхăтра вĕренсе тухнисем те çывăха илсе йышăнчĕç.

Иртнĕ кунсенче Турайри вăтам шкулта «Ăшă кăмăлтан» тĕл пулу иртрĕ. Унта пирĕн патăмăрта тĕрлĕ çулсенче ĕçленĕ ветеран-учительсене, кунтан вĕренсе тухнă хыççăн хăйсен пурнăçне вĕрентекен çул-йĕрĕпе çыхăнтарнă ентешсене, ыран учитель пулма хатĕрленекен паянхи студентсене явăçтартăмăр. Чĕннĕ вăхăта пурте пырса çитрĕç. Пирĕн йыш пысăк пулчĕ.

Тĕл пулăва ăшă салампа тата тав сăмахĕпе шкул директорĕ Ю.А. Герасимов уçрĕ. Учитель çулталăкĕ пирĕн ума çĕнĕ тĕллевсем лартни пирки, вĕсене пурнăçлассипе мĕн тумалли çинчен пухăннисем умĕнче район администрацийĕн вĕрентў, çамрăксен политики, физкультурăпа спорт пайĕн пуçлăхĕ З.Ю. Дипломатова каласа пачĕ. Ăна учитель-ветерансем кăмăллăн итлерĕç, хăйсем унпа килĕшнине пĕлтерчĕç.

Шкулти уявсене учитель-ветерансене явăçтарасси пирĕн шкулта ырă йăлара. Вĕсем çамрăк вĕрентекенсемшĕн ырă тĕслĕх, пуриншĕн те хаклă канашсен арчи. Ку хутĕнче те хăнасен ретĕнче Корнил Корнилович Корнилова, Самсон Гаврилович Гаврилова, Октябрина Семеновна Гаврилована, Зоя Петровна Толстована, Инна Яковлевна Яковлевана, Валентина Сидоровна Егорована, Валерий Филиппович Иванова, Юрий Николаевич Ершова, Алевтина Гавриловна Павлована, Борис Васильевич Андреева т. ыт. те курма пирĕншĕн те, паян шкулта вĕренекенсемшĕн те питĕ кăмăллă пулчĕ.

Президент кăçалхи çулталăка учительсене халалланишĕн хăйсем савăннине пĕр ветеран та пытармарĕ. Çакă вăл çĕнĕ ялăн пуçламăшĕ пуласса пĕлтерчĕç вĕсем. Çавна май кашниех хăйсене панă сăмахра ĕç пурнăçĕнчи интереслĕ вăхăтсене, ĕмĕрлĕхех асра юлнă самантсене аса илчĕ. Кивĕ йывăç çуртра вĕреннисемпе вĕрентнисем хыçа юлнă ĕнтĕ, анчах аса илў пурпĕрех упранать.

1997 çулхи юпа уйăхĕн 30-мĕшĕнче Турайра та çĕнĕ шкул уçăлчĕ, ачасене тивĕçлĕ пĕлў илмелли çул ансатланчĕ, пуянланчĕ.

– Турайĕнче шкул пурнăçĕ нихăçан та пĕр вырăнта тăман. Çапла вара çĕнĕ шкул тăвас ĕçе те район пулăшнипе, хамăр тăрăшнипе кĕске вăхăтра пурнăçлама пултартăмăр. Чĕрĕк ĕмĕр шкул директорĕнче ĕçленĕ В.В. Никифоровăн тăрăшулăхĕ те унта çителĕклĕ пулчĕ. Çавăнпа та шкул уçма ЧР Президенчĕ Н. Федоров килни, пурнăçланă ĕçсене вăл ырă хак пани паян та ял-йыш асĕнче, пирĕн хисепре, – аса илчĕ нумай çул шкул директорĕн çумĕ пулса ĕçленĕ Р.Т. Ершова.

Тăван шкултан вĕренсе тухнă çамрăксем пултаруллă çынсем пулса тăнине курма-сăнама яланах кăмăллă. Вĕсем хушшинче учитель профессине суйласа илнисем те нумай. Чылайăшĕ тăван шкултах ĕçлеççĕ, хăйсемпе пĕрле вĕреннĕ юлташĕсен ачисене-мăнукĕсене пĕлў параççĕ.

Паян шкул çĕнĕ аталану çулĕпе пырать. Коллектива ертсе пыракан Ю. Герасимов директор, унăн çумĕсем И. Ивановапа А. Миронова шкул аталанăвне тивĕçлĕ çулпах илсе пыма тăрăшаççĕ. Вĕсен тата учительсен тăрăшулăхне шкултан вĕренсе тухакан ачасем те аслă пĕлў паракан тĕрлĕ вĕренў заведенийĕсене вĕренме кĕрсе çирĕплетеççĕ.

Тухăçлă та сумлă ирттĕр Учитель çулталăкĕ!

Г. АНДРЕЕВА,
чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен.

Юбилейсем

Кĕрекесем тулăх пулнăран

Кăçалхи çул Москакасси ял тăрăхĕ юбилярсемпе нихçанхинчен те пуянрах. 50 çулпа 90 çулччен кăçал 194 юбиляр хăйсен çуралнă кунне паллă тăвать. Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунне вара 24 хĕрарăм чаплă лару-тăрура паллă тума ĕлкĕрчĕ.

Çак ятпа Москакасси ял тăрăхĕнчи хĕрарăмсен канашĕн членĕсем тата культура ĕçченĕсем çавра сĕтел хушшине юбилярсене мартăн 5-мĕшĕнче йыхравларĕç. Çав кун асăннă вăхăта хăнасем Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунне халалласа илемлетнĕ библиотекăна (ертўçи Любовь Ванюшкина) пĕрин хыççăн тепри пухăнчĕç. Кунта вара 55 çултан пуçăнса 85 çулхисем пулчĕç.

Малтанах вĕсене «Колокольчик» ача садĕнчи Вера Люцева тата Вера Макарова ăста ертсе пынипе пĕчĕк артистсем питĕ савăнăçлă та интереслĕ концерт кăтартрĕç. Аннесемпе асаннесем çав тери ăшă кăмăлпа пăхрĕç пĕчĕк артистсен пултарулăхĕ çине, кашни юрă-ташă хыççăн тăваллăн алă çупрĕç.

Концерт вĕçленсен артистсене канфет-пĕремĕкпе сăйларĕç. Пухăннисене вара депутатсен Москакасси ял тăрăхĕнчи Пухăвĕн депутачĕ, «Колокольчик» ача сачĕн ертўçи Александра Филимонова Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ тата юбилейсем ячĕпе ăшшăн саламларĕ, ырлăх-сывлăх, вăрăм кун-çул сунчĕ.

Ял тăрăхĕн пуçлăхĕн çумĕ Рена Малькова та пухăннисене ырă та ăшă сăмахсемпе тав туса саламларĕ. Чылайччен тăсăлчĕ уяв. Кашни юбилярăн пурнăçĕ, кун-çулĕ пирки аса илчĕç. Ял хуçалăхĕнче-и, производствăра-и ĕçленĕ вăл, кашниех мухтава тивĕçлĕ хĕрарăмсем пулчĕç кунта.

Чылайччен савăнчĕç пухăннисем, юрларĕç-ташларĕç, хăйсен пурнăçĕ пирки те каласа пачĕç. Кашнин кăмăлне кайрĕ çак тĕл пулу. Хĕрарăмсен канашĕ уяв хăнисене асăнмалăх парнесем парса чыс турĕ. Çакăн пек уяв йĕркелесе панишĕн чĕререн тав туса саланчĕç хăнасем.

Г. ГОЛУБЕВА,
Москакасси ял тăрăхĕнчи хĕрарăмсен канашĕн ертўçи.

Уяв

Пурте пĕрле савăнтăмăр

Çурхи чи илемлĕ уявсенчен пĕри – тавралăх ăшăпа тата çутăпа тулнă вăхăтри уяв – мартăн 8-мĕшĕ, Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ. Хĕрарăмсене çут çанталăк пысăк пуянлăх – ăс, чун ăшши, ыр кăмăллăх, çепĕçлĕх, иксĕлми вăйхал – парнеленĕ. Вĕсемех тĕнчене çутăрах, ырăрах, хаваслăрах тăвас тесе тăрăшаççĕ. Хĕрарăм çут çанталăк, пурнăç пуçламăшне, юратăва, илеме, шанăça сăнарлать. Вăлах пурнăç парнелет, телейлĕ ачалăх пултăр тата ачаран йĕркеллĕ çын ўстĕр тесе тăрăшать.

Хĕрарăмсен уявне халалласа Анаткассинчи Культура çуртĕнче ирех чăваш юрри-кĕвви янăрарĕ. Палăртнă вăхăта конкурса хутшăнакансем те килсе çитрĕç. Кĕçех сцена çине хуçалăх ертўçи Владимир Славич Андреев тухрĕ, уява пуçтарăннисене ăшшăн саламларĕ.

Малалла уява çамрăк артистсем – шкул ачисем – илемлетрĕç. Вĕсем хăйсен юрри-ташшипе амăшĕсене савăнтарчĕç. Лайăх концерт хатĕрленĕшĕн Валентина Алексеевна Орлова учительницăна тав сăмахĕ каламалла.

Кайран вара ăмăрту-вăйăсем пуçланчĕç. Тĕп ăмăрту тивĕçлĕ канăва тухнисемпе ферма ĕçченĕсем хушшинче иртрĕ. Спорт вăйăисемпе юрă-ташă, конкурсантсем хатĕрленĕ апат-çимĕç, алă ĕç ăсталăхĕ пурне те килĕшрĕ. Уявра юратупа ăнăçу хуçаланчĕ, туслăх çĕнтерчĕ. Уйрăмах палăрнисем вара парнесене тивĕçрĕç.

Çавăн пекех аннесене халалласа çамрăксемпе те уяв иртрĕ.

Хуçалăх ертўçине В.С. Андреева уява ирттерме пулăшнăшăн тав сăмахĕ калас килет.

Р. ГРИГОРЬЕВА,
Анаткассинчи Культура çурчĕн директорĕ.
Сăн ўкерчĕкре: уяв вăхăтĕнче.

«Моргаушимежрайгаз» сообщает

ОСТОРОЖНО – ГАЗ!

Уважаемые граждане!

С наступлением весны происходит интенсивное таяние снега, возможны размывы дорог, подвижки грунта, оползни на склонах оврагов, затопление территорий, находящихся в зоне воздействия паводковых вод. Всё это может привести к возникновению аварийных ситуаций на газораспределительных сетях и внутренних устройствах газоснабжения.

Филиал «Моргаушимежрайгаз» ОАО «Чувашсетьгаз» просит жителей Моргаушского района в целях обеспечения безопасности и предотвращения возможных аварий и чрезвычайных ситуаций на газовых сетях проявлять бдительность. При обнаружении повреждений и деформаций газопроводов, размыва грунта на их трассах необходимо срочно сообщить в газовую службу по телефону 04 или 60-2-24.

В целях предотвращения аварийных ситуаций в населенных пунктах просим с соблюдением мер безопасности вырубить сухие и подгнившие деревья, создающие угрозу надземным газопроводам, не устраивать свалки и не складывать различные материалы в охранных зонах газопроводов.

При появлении запаха газа в квартире, подъезде, подвале, во дворе дома, на улице необходимо немедленно прекратить пользование газовыми приборами и позвонить в аварийно-диспетчерскую службу филиала «Моргаушимежрайгаз» по телефону 04. Не дожидаясь приезда аварийной бригады принять необходимые меры безопасности – проветрить помещение, не допускать использование открытого огня, не включать и не выключать электрические приборы, не пользоваться электрозвонками, не курить. Предупредить об этом окружающих.

Не допускайте пользования газовыми приборами при отсутствии или нарушении тяги в дымовых и вентиляционных каналах, при неисправностях газовых приборов или их систем автоматики. Не допускайте самовольную установку, замену и ремонт газоиспользующего оборудования, монтаж и демонтаж газопроводов.

Организациям по обслуживанию жилого фонда, собственникам газифицированных зданий необходимо обеспечить выполнение требований «Правил и норм технической эксплуатации жилого фонда», «Правил предоставления коммунальных услуг гражданам» и других нормативных документов, для чего:

- проводить работы по очистке крыш зданий от снега и сосулек, падение которых может угрожать надземным и фасадным газопроводам;
- содержать в технически исправном состоянии вентиляционные каналы, дымоходы и их оголовки;
- не загромождать места расположения газовых колодцев, крышек коверов подземных газопроводов, очищать от снега и льда крышки люков колодцев смежных с газопроводами инженерных сетей;
- систематически проверять технические подполья и подвалы жилых домов на предмет отсутствия запаха газа;
- своевременно заключать договоры со специализированными организациями на техническое обслуживание и ремонт внутренних устройств газоснабжения.

Соблюдение мер предосторожности позволит обеспечить безопасность.

Филиал «Моргаушимежрайгаз» ОАО «Чувашсетьгаз».